Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – pchd21.ru
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Александр Алексеевич Галкин**
**Книга: Хĕвел тухсан=Восход**
**Стихотворение: Хăйăр çинче**

Килнĕ-тăкнă урама,
Сарă хăйăр пĕр купа!
Питĕ селĕм выляма
Ун çинче халь ушкăнпа.

Ак, Тимур,
Кунтах Якур,
Ваçукпа Куçук та пур…
Кĕр-кĕрлетпĕр иртенпех –
Çитрĕмĕр машшинсемпех.

Пĕрисем хыватпăр çул
Турттаратпăр хăйăр, чул…
Теприсем кĕпер тума
Хатĕрлеççĕ чус-хăма.

Пикенсех ĕçлет Марук…
– Çитĕ, чарăн! – тет Варук. –
Тулчĕ-çке машшин – каяр,
Чул вăл йывăр – çăмăл мар.

– Эй, çул пар-ха хăвăртрах?!
Тет Якурĕ – Тимура
Мĕн ара чарса тăратăн,
Эп васкап –çке – куран-тăр?
Пăрăхсем пушатмалла,
Тепĕр рейс ман тумалла!

– Килĕр-ха кунта, атьсемĕр,
Пулăшăр мана, туссемĕр?!
Ниепле те тухма çук,
Лакса лартăм! – тет Куçук.

Кирлĕ пулăшу, паллах.
Трактора хай хăвартрах
Çавăрап та эп калле
Вĕçтереп ун патнелле.

Меллĕн çаклатса илсе,
Кăларатăп сĕтĕрсе
Çул çине ун машшинне, –
Ăс паратăп кăшт хăйне:

– Машинпа, – теп, – ан выля,
Пул йĕркеллĕ унпала!
Унсăр техника тени
Час ванать вăл, пĕлетни?

Ĕç вĕрет…
Кĕрлет машин…
Ӳкнĕ чăм шыва кашни.
Экскаватăрсем шавлаççĕ –
Ӳпенсех канав чаваççĕ…

Вăрăм майлă крансемпе,
Вĕçĕ-вĕçĕн, йĕркипе
Пăрăхсем хурса пыратпăр –
Газ кĕртешĕн хыпăнатпăр…

Çăмăл мар кунта ĕçсем –
Пурпĕр пит хавас чунсем!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.